Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII · ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMIX

21 (7661) № ✻ Шăмат кун, 2009 çулхи мартăн (пуш) 14-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**Ыран – Суту-илӳ, халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерессин тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх ĕçченĕсен кунĕ**

**Суту-илӳре, йăла службинче тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхра ĕçлекенсем тата асăннă отрасльсен ветеранĕсем!**

Сире пурне те хăвăрăн професси уявĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Сирĕн ĕç районта пурăнакансен пурнăç условийĕсене лайăхлатассипе тӳрремĕнех çыхăннă. Эсир потребительсен ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерес, çынсене тĕрлĕрен пулăшу парас тесе тимлетĕр. Магазинсенче таварсен ассортименчĕ пуянлансах пырать, йăла ыйтăвĕсене те районта тĕрлĕ енлĕн тивĕçтерeççĕ, килте ăшă, çутă, шыв, газ пур – кашни çынна савăнăç парнелетĕр, кашни çемьене хăт кĕртетĕр. Çурт-йĕре тытса тăмалла-и, тĕрлĕрен юсав ĕçĕсем ирттермелле-и – пур ĕçе те çийĕнчех, пахалăхлă тата паянхи кун ыйтнине шута илсе пурнăçлама тăрăшатăр. Районăн социаллă-экономика аталанăвĕшĕн çине тăрса вăй хуратăр. Тавах сире çакăншăн.

Эсир малашне те хăвăрăн тивĕçĕре кăмăлтан пурнăçласса шанатăп. Йывăрлăхсене çĕнтерсе, малалла татах ӳсĕмлĕрех вăй хумалла пултăр. Сывлăхăр çирĕп, кун-çулăр вăрăм пултăр, ăнăçу ĕçре вăй парса пытăр. Çемьере килĕшӳпе юрату, телей сунатăп.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

# Ĕçри çитĕнӳсемпе кĕтсе илеççĕ



*Эсир сăн ӳкерчĕкре Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕнче ĕçлекен техобслуживани инженерне Николай Матвеева, Владимир Павлов мастер-энергетика, Валерий Веселов газоэлектросварщика, Василий Тодинов инженер-строителе, Валерий Матвеев газоэлектросварщика, Андрей Магаев водителе тата Юрий Щегольков газооператора куратăр. Вĕсенчен ытларахăшĕ предприятире пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ. Шанса панă ĕçе ответлăха туйса пурнăçлама хăнăхнă. Ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăраççĕ. Хăйсен професси уявне вĕсем ĕçри çитĕнӳсемпе кĕтсе илеççĕ.*

**В. ШАПОШНИКОВ** сăн ӳкерчĕкĕ.

**Ĕçсĕрлĕх ыйтăвĕпех**

# Хушма ĕç вырăнĕсем пулĕç

***Чăваш Республикин Правительстви 2009 çул валли Чăваш Республикинче пурăнакансене ĕçпе тивĕçтерме пулăшмалли республикăри тĕллевлĕ программа йышăнни çинчен вулакансене пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ. Унпа килĕшӳллĕн ĕçсĕррисене пулăшма районсене укçа-тенкĕ уйăрса панă. Мĕнле майпа туйса илĕç çак пулăшăва ĕçсĕррисем? Ку ыйту çине районти ĕçпе тивĕçтерекен центр ертӳçи Т.А. АНТОНОВА çапла хуравларĕ:***

– Çак укçа-тенкĕпе 4 тĕллевпе усă кураççĕ:

1) массăллăн ĕçрен кăларас хăрушлăх пур çынсене (предприятинче тулли кун йĕркипе ĕçлемесен, вăхăтлăха ĕçлеме чарăннă пулсан, ĕç укçине сыхласа хăвармасăр отпуска яраççĕ пулсан, ĕçлекенсене ĕçрен хăтармалли мероприятисем пуçланнă пулсан) професси тĕлĕшĕнчен вĕрентме;

2) обществăлла ĕçсене йĕркелеме, вăхăтлăх ĕç вырăнĕсем тума, ĕçсĕррисен, ĕç шыракан граждансен, çав шутрах вĕренӳ заведенийĕсенчен вĕренсе тухнă çамрăксен, çавăн пекех ĕçрен массăллăн хăтарнисен ĕç опычĕ пуçтарăнтăр тесе вĕсене стажировка витĕр кăларма;

3) граждансене адреслă пулăшу пама: кунта граждансене урăх вырăна ĕçлеме кайма пулăшни те кĕрет;

4) пĕчĕк предпринимательствăна аталантарма тата ĕçсĕр граждансене хăйсене валли ĕç вырăнĕ тупма.

**– Тамара Афанасьевна, халĕ районти ĕçпе тивĕçтерекен центр çак енсемпе мĕнле ĕçлесе пыни çинче чарăнар-ха.**

– Чи малтанах çакна каласа хăварам. Ĕçсĕррисене пулăшма палăртнă халь çеç асăннă 4 ентен пĕрремĕшĕпе Чăваш Республикинчи ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службi ĕçлет. Урăхла каласан, пĕрремĕш ушкăна кĕрекенсене професси тĕлĕшĕнчен вĕрентме килĕшӳсене вĕренӳ учрежденийĕсемпе республикăри ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службi тăвать. Вăлах камсене вĕренме ямалли пирки предприятисемпе учрежденисемпе те ĕçлет. Ытти енĕсене районти ĕçпе тивĕçтерекен центр пурнăçа кĕртет.

Ĕçсĕррисене пулăшма пирĕн района пĕтĕмпе 12 миллион та 16,3 пин тенкĕ укçа уйăрнă. Çак сумма предприятисемшĕн пысăк пулăшу: 733 ĕçсĕр çынна е ĕç шыракана, предприятисенчи ирĕксĕрех каймалла пулнă отпускри çынсене вăхăтлăх ĕç тупма май парĕ. Тӳрех çакна та каласа хăварам. Эпир ку программăпа ĕçсĕррисен статусне илменнисене те пулăшатпăр.

Халĕ хăш предприятире миçе çын вăхăтлăх ĕç вырăнĕ тупма пултарни çинче уйрăммăн чарăнар.

«Сеспель» акционерсен хупă обществине пулăшма 3 миллион та 475,4 пин тенкĕ укçа уйăрнă. Çакă кунти вăхăтлăха ĕçлемен, ирĕксĕрех отпуска каймалла пулнă 212 çынна вăхăтлăх ĕç тупма май парать. Вĕсем çурта, цехсене юсанă çĕре хутшăнĕç, слесарь ĕçĕсене пурнăçлĕç, территорие тирпей-илем кĕртнĕ çĕрте ĕçлĕç.

Тепĕр 5 çын районти социаллă хӳтлĕх пайĕнче документсем çырса вĕсене шута илессипе ĕçлĕ. Çакна валли 81,9 пин тенкĕ укçа куçарса паратпăр. Мăн Сĕнтĕрпе Çулаври ватă çынсене вăхăтлăх пурăнмалли уйрăмсенчи çынсене пăхма 8 çынна ямалла. Çак тĕллевпе 131 пин тенкĕ уйăрнă.

Районти тĕп больницăра та документсемпе ĕçлеме, медицина халачĕсене якатма, çиелти тумтире пама 11 çын валли ĕç вырăнĕ пулĕ (180,3 пин тенкĕ куçаратпăр унта). Мăн Сĕнтĕрти 2-мĕш номерлĕ райбольницăра çак ĕçсене тума 4 çынна яратпăр (65,6 пин тенкĕ).

Çак программăпа килĕшӳллĕн районти вĕренӳ учрежденийĕсене те вăхăтлăх ĕç вырăнĕсем тума 2 миллион та 16,3 пин тенкĕ куçарса паратпăр. Çакă 123 çынна ĕçшĕн тӳлеме, вĕсемшĕн тĕрлĕ фондсене (пенси, страховани т. ыт. те) куçарма çитĕ. Эпир ĕçлеме яракан граждансем шкулсемпе ача сачĕсене тытса тăрас тата аталантарас ĕçсене хутшăнĕç.

«Çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха ертсе пыракан компани» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра та ĕçсĕррисемпе ĕç шыракансем валли 27 ĕç вырăнĕ тумалла (442,6 пин тенкĕ куçаратпăр). Вĕсем цехсене юсĕç, слесарь ĕçĕсене тăвĕç, территорие тирпей-илем кĕртĕç.

Ял тăрăхĕсене вара пĕтĕмпе 80 çынна ĕçлеме яратпăр. Çакна валли 1 миллион та 311,4 пин тенкĕ уйăрнă. Унта вĕсем палăксемпе обелисксене, вилтăприсене, масарсене тирпейлесе пăхса тăрĕç, çут çанталăка сыхлас ĕçсене хутшăнĕç.

**(Вĕçĕ 5-мĕш стр.).**

**Республикăра**

# Республика бюджечĕ пуянланать

Кĕçнерни кун Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров Мускавра федераци министерствисенче ĕçлĕ тĕл пулусем ирттернĕ. Çав шутра Раççей Правительствин Председателĕн çумĕ – финанс министрĕпе Алексей Кудринпа курнăçса калаçнă.

Раççей Федерацийĕн Финанс министерствинчи тĕл пулура 2009 çулхи пĕрремĕш квартал вĕçлениччен Чăваш Ене федераци бюджетĕнчен 730 млн. тенкĕ хушма укçа парасси çинчен калаçса татăлнă. Çакă республика тупăшне 1,025 млрд. тенкĕ пысăклатĕ. Унсăр пуçне Чăваш Республики банкăн 1 млрд. та 836 млн. тенкĕлĕх кредичĕпе усă курма ирĕк илнĕ. Ку планпа пăхнă тăкаксем валли укçа уйăрассипе çыхăннă ыйтусене ăнăçлăрах татса пама май парĕ.

**Вырăнти хăй тытăмлăх**

# Ильинка ял тăрăхĕн – çĕнĕ пуçлăх

Мартăн 6-мĕшĕнче Ильинка ял тăрăхĕнчи депутатсен Пухăвĕн черетсĕр ларăвĕ иртнĕ. Депутатсем Б.А. Сапожников çул çитнипе пенсие тухнă май вăхăт çитмесĕрех хăйне ял тăрăхĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсенчен хăтарма ыйтса çырнă заявление пăхса тухнă. Депутатсем унăн ыйтăвне тивĕçтернĕ.

Ильинка ял тăрăхĕн пуçлăхĕ пулма депутатсем пĕр саслăн 4-мĕш номерлĕ пĕр мандатлă Макаçи суйлав округĕн депутатне Юрий Викентьевич Перцева суйланă. Вăл 1961 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнче Мăн Шашкар ялĕнче çуралнă, 1987 çулта Чăваш патшалăх ял хуçалăх институтне вĕренсе пĕтернĕ. Ял тăрăхĕн пуçлăхне суйличчен «Хлебороб» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн агрономĕ пулса ĕçленĕ.

**«Сывлăх» наци проекчĕ**

# Кунта Муркашсем те сипленме пултараççĕ

Шупашкарта травматологи, ортопеди тата эндопротезировани центрĕ ĕçлеме тытăнни пирки хаçатра пĕлтернĕччĕ. Мартăн 3-мĕшĕнче унта пуçласа 8 операци ирттернĕ.



Пĕрремĕш ăнăçлă операцисем ирттернĕ ятпа республика çыннисене тата медицина общественноçне Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин халăх сывлăхне хушшинчи ĕçĕсен комитечĕн председателĕ Константин Косачев тата Санкт-Петербургри Вреден ячĕллĕ травматологипе ортопеди институчĕн директорĕ Рашид Тихилов саламланă. Пресс-конференцире ЧР сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министрĕ Нина Суслонова палăртнă тăрăх, центр тулли хăватпа ĕçлеме тытăнни пирĕн республикăшăн кăна мар, пĕтĕм çĕршывшăн та историллĕ самант пулса тăрать. Асăннă центр Раççейри пур субъектра пурăнакансене те квалификациллĕ пулăшу пама пултарать. Кунти врачсем Раççейри, Европăри тата Америкăри малта пыракан клиникăсенче стажировкăра пулнă. Центр специалисчĕсем эндопротезировани енĕпе 400-е яхăн операци ирттернĕ те ĕнтĕ. Чирлисене суйласа илес ĕç пырать, кĕтекенсен хучĕ пур, унта 2500 çын ытла.

Клиника пациенткисенчен пĕри Наталья Федий çакна палăртнă: «Пирĕн республикăра çакăн пек центр уçăлни питĕ лайăх. Çакна курса куç алчăрса каять. Республика ертӳçисене çынсене пурнăç ырлăхне туйма хăйсенчен мĕн килнине пĕтĕмпех тунишĕн пысăк тав. Мĕншĕн тесен туяпа утнă чухне тулли пурнăçпа пурăннă пек туйăнмасть». Михаил Леонтьев вара хушса хунă: «Юмахри пекех халĕ. Пирĕн республика çыннисен ку медицина пулăшăвне илме малашне Мускава е Санкт-Петербурга каймалла пулмĕ. Пациентсем валли пур условисем те пур».

Поликлиника регистратурине 8(8352) 30-58-26 телефонпа шăнкăравламалла. Травматологи, ортопеди тата эндопротезировани центрĕн сайчĕ çинче те (http://www.orthoscheb.com/) хăвăра интереслентерекен ыйтусем çине хуравсем тупма пулать.

**«Единая Россия» партин Муркаш районĕнчи уйрăмĕн обществăлла йышăну пӳлĕмĕнче граждансене март уйăхĕнче йышăнмалли график**

| Хăш кун | Йышăнмалли вăхăт | Кам йышăнать |
|---|---|---|
| Мартăн 17-мĕшĕ | 10–14 сех. | В.Г. ДАНИЛОВ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, политканаш членĕ |
| Мартăн 19-мĕшĕ | 10–14 сех. | А.Ф. КОРНЕЕВА, ĕçтăвком ертӳçи, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕн В.А. Морозовăн пулăшаканĕ, политканаш членĕ |
| Мартăн 24-мĕшĕ | 10–14 сех. | Б.В. Андреев, Муркаш райповĕн канашĕн председателĕ, политканаш членĕ |
| Мартăн 26-мĕшĕ | 10–14 сех. | А.Е. Андреева, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, политканаш членĕ |

**Саламлатпăр**



Хамăрăн ăшă кăмăллă та чĕререн хисеплесе юратнă аннене, асаннене, кукамая – Шетмĕпуç ял тăрăхне кĕрекен Турхан ялĕнче пурăнакан **Нина Ивановна КУДРЯВЦЕВАНА** мартăн 16-мĕшĕнчи 60 çулхи юбилейпе чĕререн тухакан чи ăшă салампа саламлатпăр.

Хаклă аннеçĕм, эсĕ пире пурнăç парнелерĕн, ура çине çирĕппĕн тăратрăн, пурнăç çулĕ çине тухма яланах ырă канашсемпе пулăшрăн. 40 çул ытла тăван колхозра ĕçлесе «Ĕç ветеранĕ» медале, нумай Тав хучĕсене тивĕçрĕн. Паян та эсĕ пире хавхалантарса пулăшсах тăратăн. Сана юбилейпа саламласа нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх, канлĕ ватлăх сунатпăр. Савăнăç куççулĕ, телейлĕ кулă çиçтĕр яланах сăн-питӳнте.

**Салампа: ывăлĕ, кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем.**



Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан **Евдокия Даниловна ОСИПОВАНА** 90 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Юбилей ячĕпе саламласа сана сурпан пек вăрăм кун-çул, юман пек çирĕп сывлăх, иксĕлми телей сунатпăр. Малалла та ачусемпе, мăнукусемпе, прамăнукусемпе савăнса пурăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: 6 хĕрĕпе ывăлĕ, кĕрӳшĕсем, кинĕсем, 25 мăнукĕпе 34 прамăнукĕ, тăванĕсем.**